# Çĕнтерÿ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

73 (7498) № * Юн кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 5-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ**

## «Çĕнĕ ÿсĕмсем тумалла пултăр»

Иртнĕ шăмат кун шкулсенче пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ. Районĕпе 4650 ача партăсем хушшине ларчĕ, çав шутран 705-шĕ Муркаш шкулĕнче пĕлÿ пухĕç. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнине халаллана савăнăçлă линейкăра ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене, учительсене чи малтанах шкул директорĕ В.В. Ялушкин саламларĕ.

– Иртнĕ вĕренÿ çулĕ пирĕн шкулшăн палăрăмлă пулчĕ. Математикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе пĕрлехи патшалăх экзаменĕсен результачĕсем, ку тĕлĕшри республикăри вăтам кăтартупа танлаштарсан, пысăкрах пулчĕç. Владислав Валентинович çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче çĕнĕ ÿсĕмсем тума ырлăхсывлăх сунчĕ.

Муркашсем ÿсĕмлĕ ĕçлени район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕнчен те курăнчĕ.

– Паян пирĕн çĕршывра ачасене тарăн пĕлÿ илме, вĕрентекенсене хавхаланса ĕçлеме мĕн пур условисем туса параççĕ. Тăрăшсан курăмлă ÿсĕмсем тума пултарнине çак тĕслĕхсем тепĕр хут çирĕплетсе параççĕ. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Муркаш шкулĕ ЧР Президенчĕн грантне, Москакассипе Нискасси шкулĕсем РФ Президенчĕн грантне тивĕçрĕç, – палăртрĕ Юрий Александрович. Район пуçлăхĕ хĕрачасемпе арçын ачасене "4" тата "5" паллăсемпе çеç вĕренме, пурнăç çулне тĕрĕс суйласа илме сунчĕ. Пурне те Пĕлÿ кунĕ ячĕпе ăшшăн саламларĕ.

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Г. Данилов салам сăмахĕнче республикăра ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене пулăшас тĕллевпе нумай ĕçсем туса иртterнине палăртрĕ, Муркаш шкулне "Единая Россия" политика партийĕн регионти уйрăмĕн Тав çырăвне пачĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă ятпа Муркашсене çавăн пекех ЧР Патшалăх ветеринари службин ертÿçи В.К. Тихонов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕн – патшалăх учрежденийĕн ертÿçи Р. А. Кондратьева, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин саламларĕç. Муркаш почтампчĕн представителĕ И.А. Васютина пуçтарăннисене вĕренÿ çулĕ пуçланнă ятпа саламланă май Пĕтĕм Раççейри 5-мĕш çыру конкурсне пĕтĕмлетрĕ, çĕнтерÿçĕсене чысларĕ. Линейкăра çавăн пекех Муркаш шкулĕн директорĕн çумĕсем О.Д. Ефановпа Г. Л. Сидюшкина "Çултаlăкри чи пултаруллă вĕренекен", ытти тĕрлĕ конкурссен çĕнтерÿçисене чысларĕç.

Акă линейкăра чи малта тăракан, аллисенчи чечек çыххисем хыçĕнче кăшт пысăкрах курăнакан арçын ачасемпе хĕрачасем тем сăмах каласшăн. Муркаш шкулĕн алăкне пĕрремĕш хут уçакансем кăçал 66-ăн иккен. Вĕсем калакан сăвă йĕркисенчен хăйсем шкула тахçанах килме ĕмĕтленни палăрчĕ. Эппин, нумай кĕттерес мар: ав вĕсен пурнăçĕнчи чи пĕрремĕш шăнкăрав янăрать. Пĕрремĕшсене пĕлÿ тĕнчине чĕнчĕ вăл, аслăраххисене вара çав çул çÿреври татах та пысăкрах ÿсĕмсем тума йыхăрчĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çÿлерех асăннă хăнасемпе пĕрле çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă ятпа çавăн пекех Муркаш лицейĕнче тата Оринин шкулĕнче пулса саламланă.

**Л. ПАВЛОВА.**





**Йыхрав**

## Сентябрĕн 7-мĕшĕнче – черетсĕр лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2007 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнчи 18 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 20-мĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче кăçалхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1. Пĕр мандатлă 1-мĕш номерлĕ Октябрьски тата пĕр мандатлă 7-мĕш номерлĕ Мăн Тутаркас суйлав округĕсемпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсен хушма суйлавне ирттересси çинчен.

2. Чăваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссине Муркаш районĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хума ыйтасси çинчен.

3. «Муркаш районĕнчи ял хуçалăх аталанăвĕн тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварпа апат-çимĕçĕн рынокне йĕркелессин 2008 – 2012 çулсенчи Программи» çинчен.

4. Депутатсен районти Пухăвĕн 2005 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи С-4/5 № «Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин налуксемпе тÿлевсем çинчен калакан законодательствипе вырăнти самоуправлени органĕсем çине хунă налук йĕркелĕвĕн ыйтăвĕсем çинчен» положение çирĕплетесси çинчен».

5. Наградăсем илме тăратасси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, ял хуçалăх предприятийĕсен ертÿçисене, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене чĕнеççĕ.

**Райадминистрацире**

## Ĕçри хастарлăхшăн

Район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн августăн 27-мĕшĕнчи 381 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре тунă çитĕнÿсемшĕн:

– **Валентина Алексеевна АНИКИНАНА**, Йÿçкасси шкулĕн директорĕн çумне;

– **Ангелина Иосифовна БЕЛОВАНА**, Сосновка шкулĕн пуçламăш классен учительне;

– **Светлана Федоровна ЖЕЛТОВАНА**, Москакасси шкулĕн пуçламăш классен учительне;

– **Раиса Алексеевна КОЗЛОВАНА**, Шомик шкулĕн пуçламăш классен учительне;

– **Альбина Дмитриевна МАКСИМОВАНА**, Муркаш шкулĕн математика учительне;

– **Сергей Николаевич РОМАНОВА**, Чуманкасси шкулĕн физкультура учительне.

2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннăшăн – **Владимир Германович НИКИТИНА**, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне – капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхне.

**Ĕçре пултаруллисем**



## Шанăçа тÿрре кăларать

***Сентябрĕн 1-мĕшĕ çитнĕ май ответлă тапхăр шкул ачисемпе учительсемшĕн кăна мар, Юрий Кузьмич Ванюшкиншăн та пуçланчĕ темелле. Муркаш шкулĕнче шкул автобусĕн водителĕнче тимлет вăл. Хăйĕн ĕçне ответлăха туйса пурнăçлать. Асăрханулăх та, тимлĕх те кунта вара уйрăмах кирлĕ: куллен шкул ачисене илсе çÿретĕн вĕт-ха. Хăй пурнăçлакан ĕç епле пысăк ответлăхпа çыхăннине аван ăнланать вăл.***

***Сăн ÿкерчĕкре: шкул автобусĕн водителĕ Ю.К. Ванюшкин.***

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ÿкерчĕкĕ.***

**Район уй-хирĕсенче**

Районти ял хуçалăх предприятийĕсенче вырма ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне тĕш тырă культурисене 9091 гектар çинче (95,3 процент) вырса çапнă. «Е. Андреев яч. хис., «Волга», К. Иванов яч. хис., ООО «ВТМ», «Лидер», «Свобода», «Сеятель» хуçалăхсенче кăна вырма вĕçленмен-ха.

Тĕш тырă тухăçĕ вăтамран гектар пуçне 17,8 центнерпа танлашать. Хальлĕхе чи пысăк тухăç Чкалов яч. хис. хуçалăхра – 3561 центнер.

Улăма 7509 гектар çинчен (çапса тĕшĕленин 82,6 проценчĕ) пухса тирпейленĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхра ку ĕçе япăх йĕркеленĕ (26 процент).

Кĕрхи культурăсене 3153 гектар (58 процент) акнă. Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем кĕр аки планĕсене ирттерсе тултарнă.

**Юбилей**

## Саламлатпăр

Çут тĕнчери чи хаклă çыннăмăра – аннене, асаннене, кукамая, хунямана, кинемее, инкене – Ятман ялĕнче пурăнакан **Анна Федоровна СКВОРЦОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн шăранса тухакан чи ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телей сунатпăр.

**Ăшă саламра: 2 ывăлĕ, 2 хĕрĕ, 2 кинĕ, 4 мăнукĕ, Малышевсемпе Ефимовсен çемйисем.**

**Конкурс итогĕсем**

## ВЫРМАРА МАЛТИСЕМ

**ТЫРĂ ÇАПСА ТĔШĔЛЕССИПЕ ХУÇАЛĂХСЕНЧИ КОМБАЙНЕРСЕМ ХУШШИНЧЕ МАЛА ТУХНИСЕМ (АВГУСТĂН 28-МĔШĔ – СЕНТЯБРĔН 3-МĔШĔ)**

**"Дон-1500" комбайнсен класĕнче:**

1 вырăнта – "Рассвет" агрофирмăри Николай Николаевич Кочанов комбайнер экипажĕ, 240 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – "Свобода" хуçалăхри Валерий Александрович Соловьев комбайнер экипажĕ, 184 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – «Свобода» хуçалăхри Александр Григорьевич Сергеев комбайнер экипажĕ, 117 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**"Енисей – 1200" комбайнсен класĕнче:**

1 вырăнта – «Рассвет» агрофирмăри Анатолий Николаевич Ермаков комбайнер экипажĕ, 215 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăна никама та парас мар.

3 вырăнта – Е. Адреев ячĕллĕ хуçалăхри Валерий Никодимович Осипов комбайнер экипажĕ, 84 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**"Нива – СК-5" комбайнсен класĕнче:**

1 вырăна никама та парас мар.

2 вырăна никама та парас мар.

3 вырăнта – Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхри Валерий Иванович Пугачев комбайнер экипажĕ, 53 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**Механизаторсем хушшинчи конкурс итогĕсене пĕтĕмлетекен районти комисси.**

**Вулакансене пĕлме**

## Район хаçатне çĕнĕ хакпа çырăнтараççĕ

**Райхаçат çырăнмалли хак сентябрĕн 1-мĕшĕнчен малтан пĕлтерне пек 27 процент мар, 15 процент чухлĕ çеç хакланчĕ.**

**Вулакансене ăнланмалла пултăр тесе хăш-пĕр цифрăсем илсе кăтартма тивет. Почта хаçат валеçнĕшĕн илекен хака 27,8 процент ÿстерчĕ. Редакци вара хаçат кăларнăшăн илекен хака 5,8 процент çеç хăпартрĕ. Çапла вара райхаçата çырăнса илмелли пĕтĕмĕшле хак 15 процент çеç ÿсрĕ.**

**Паллах, редакци хăйĕн хакне почта ĕçченĕсем пек 27,8 процент мар, 5,8 процент çеç пысăклатнăран укçа-тенкĕ чылай çухатать. Паянхи тиражпа шутласан çак сумма 48 пин те 348 тенкĕпе танлашать.**

**Юрĕ, пасар саманинче пурăнатпăр пулин те, пире вулакансем укçаран хаклăрах. Редакци тăкаксене саплаштармалли майсем шырĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли çĕнĕ хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**